30-271

ХУТАР



# ХУРА ТАР

СССР-ти ХАЛӐХСЕН ТӖП ИСТАТТӖЛСТВИ
Мускав ★ 1930

ХУТАР

# ХУРА ТАР

САВАСЕМ

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав * 1930

Главлит № А-68.392 Зак. № 1020 Тираж 3000

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР. Москва,
Шлюзовая набережная, 10.

# ТĂВĂЛ...

1

Тăвăл, йе тăман аврашса килсен,
Улаť тĕнђе темиçе кĕтесрен:
Кĕрлесе лараť пĕтĕм çĕр варри,
Таçталлах кайаť хăватлă сасси;
Хĕрлĕ Раççейĕн аслă тĕпĕнђен
Сикет вут-хĕм пĕлĕте çитиђђен...

2

Тăвăл, йе тăман аврашса килсен,
Улаť тĕнђе темиçе кĕтесрен:
Вутлă-йунлă хум ђупаť те ђупаť,
Пĕтĕм çĕре хăй çумне ыталаť;
Çавăнпа кашлаť унăн варри,
Таçталлах кайаť хăватлă сасси...

3

Тăвăл, йе тăман аврашса килсен,
Улаť тĕнђе темиçе кĕтесрен:
Пеккин, Мускав, Париш, Лонтăн урлах
Шывсем кайаç йанраса ђăнахах,
Çавăнпа Раççейĕн хĕрлĕ тĕпĕнђен
Сикет çут хĕм таçта çитиђђен...

## ÇАМРĂК ТУСĂМА

Ут йулташăм,
Ут малалла!
Куран кĕтет
Çĕнĕ тĕнҫе.

Авă лаçра
Хĕлхем сикет,
Ав тĕттĕме
Çурса йарать.

Хытса çунать
Хĕп-хĕрлĕ вут,
Ав шăранать
Хурçă тимĕр.

Паллă сунтал
Хĕрсе çитнĕ,
Пирĕн вăй-хал
Ĕçшĕн пиçнĕ.

Авă лерен
Хĕвел тухать,
Пирĕн умма
Кулса килет.

Ĕçҫен хресҫен
Ана çинҫе
Тырă сапса
Ырлăх тăвать.

Тырă хумне
Вăл курасшăн
Трактăр илсе
Пурнăç тума,

Машшин урлă
Ҫĕр вăйпала
Çутă патне
Утса çитме...

Лере савăт
Вăйпа улать,
Ĕç сыннине
Утма ҫĕнет.

Пĕрре,
Иккĕ —
Вăйлă утать,
Сар хĕвеле
Илме кайать...

Ăна курса
Йалав вĕçет
Пĕтĕм çĕре
Вăл ыталать...

Пĕрре,
Иккĕ —
Хум йăванать!
Пĕрре,
Иккĕ —
Тĕнҫе улать!..

* * *

Пит те аван-çке, пит те аван
Шупашкарта ир-ирех çӳреме:
Ирӗ те аван, хӗрлӗ ир пайан,
Вӑхӑт та-çке ӗç патне кайма...
Хамӑр ӗç пире такçанах йыхрать,
Лаçра та сунтал кӗтсе ларать...
Ей, тӑван çамрӑк! Авӑ, ав млатук, —
Унтан ђапли урӑх пулас та çук.
Пӗтӗм хастарлӑх çантан килет,
Вӑйу-хӑвату унпах пӗрлешет.
Хамӑр ӗç пире такçанах йыхрать,
Лаçра та сунтал кӗтсе ларать...

---

## ВӐХӐТ

*К. Краснова*

Умра акӑ
Сехет шаккать:
Пӗрмай ӗçлет...
...Вӑхӑт пире
Кӗтсе тӑмасть;
Ӗç те лере
Вӑйсӑр пулмасть.
Сехет шаккать,
Пӗрмай ӗçлет
Ӗç патне те
Тухма ђӗнет.
Ӗç пирӗн!
Пурнӑç пирӗн!
Шакка, сехет,
Шакка хытрах...
Вӑхӑт çитет,
Йалав вӗçет;
Çӗр çаврӑнать,
Кӑшт та тӑмасть...

## ПИРĔН ИР

— „Вăхăт мĕн ђул?“ —
Терĕ йулташ.
— „Вуниккĕ пуљ...“ —
Терĕм хуллен.

— „Ак кантăкран
Пăх халĕ ес,
Тĕнђе темле...
Çутă... пĕлмес...“

— „Çурçĕр иртсе
Кайнă еппин,
Çутă хĕрсе
Сарăлаť тин...

Акă тĕттĕм
Умран кайаť,
Хĕвел çутти
Ăна çураť...

Хĕвел тухăç
Вут умĕнђе,
Пĕтĕм пĕлĕт
Ун аллинђе...

Ав сар хĕвел
Килет кунта, —
Тин ĕнтĕ вăл
Выљаť ĕçне...“

— „Хĕвел, хĕвел,
Сарă хĕвел!
Пирĕнпех ес
Халĕ кулан;

Пирĕнпех ес
Çунан ĕçре!
Пирĕнпех ес
Утан-ђупан...

...Сан çуттупа
Пурнăç тăваť;
Йăвăр хуллен
Пĕтсе пыраť..!!

* * *

— „Апла пулсан,
Выља-ха вăй!...
Хастар вĕре
Кăварлă йун!..

Çӳлелле вĕç,
Вĕç-ха, йалав!..
Хупласа ил
Пĕтĕм çĕре!..

Сиктерсе кăлар
Тинĕс шывне,
Таçтах вĕçтер
Çӳппе-çаппа!...

## ЙУРĂ

Каллех йурлатăп, савнă ир, сана,
Ҫунтан ыталап ырă сăнна.

Паттăр ҫын сана ĕҫре мухтавлать,
Пĕтĕм вăйĕпех саншĕн тăрăшать.

...Епĕ те сана йурăра ырлам,
Сăнна-пуҫна пĕтĕмпех кĕмĕллем.

Кĕмĕллем епĕ ĕҫĕн хăватне,
Савам йуррăмпа унăн аҫине...

Авă, вăл ҫамрăк, утать ĕҫ патне!
Аллине тытнă хăйĕн млатукне.

Ҫирĕп аллипе нихҫан та ӳсмест.
Йăвăр ĕҫре вăл пĕрре хăрамасть,

Ҫавăнпа аллинҫе ҫав тери вăй,
Ана пиллетĕ ҫакă ире вăл...

Апла пулсан, ҫутă ир, сана
Ыталам, йуратам епĕ пĕр кана...

Епĕ — ĕҫ аҫи, ĕҫре пиҫнĕ еп,
Ĕҫĕн йуррине те хам ҫинех илеп.

Сакăр сехет ҫитрĕ, сакăр сехет,
Малалла утатăп ĕҫĕн аҫи — еп.

## ĔҪ АҪИ

Кам ĕҫе йуратмасть? Кам вăл? — калăр мана!..
Кам ĕҫрен тарать, ахалех иртерет куна?..

Пăрăн ун пек ҫын, пăрăн ман умран, пăрăн!
Ес манăн тус мар, манăн мар, ман пулаймăн.

Еп санпала килĕшмесп... Ҫук, ҫук килĕшмесп..!
Есĕ — таркăн, ĕҫрен тарнă, пăрăннă ес...

Епĕ ун мар, еп — ҫаплă ĕҫĕн аҫи.
Алăмра, ҫамрăк ăшăмра, вĕри ĕҫ-йун.
Ăшăмран, ҫамрăк, вĕри ĕҫ-йун.
Вăл вĕрет, сиксех тухаŭ пайан ĕҫлĕ кун.
Шухăшăм — вут, ҫунса тăран вут хĕлхем — ҫутă.
Ҫутă сикет, выҫаŭ, манпа выҫаŭ — акă!..

---

## ҪАМРĂКЛĂХ

Ҫамрăк ĕмĕр кунĕсем —
Пурнăҫ ылтăн вăхăтсем
Иртрĕҫ, кайрĕҫ васкаса,
Ҫамрăк ҫуна пусарса...

Калла-малла шутласан,
Астăватăп ун ҫинҫен:
Вăлă иртрĕ пĕр пĕҫҫен
Ҫамрăк ĕмĕр тăршшĕнҫен.

Иун вĕренĕ ĕҫ панҫе
Ҫĕре хастар тапнăран;
Ăс выҫанă ун ҫухне
Ытла ухмах пулнăран...

Ҫак вăхăта астусан,
Йăвăр йухса кайатăп;
Пуҫа шухăш килсессĕн
Хамăн йурра йурлатăп...

---

## ҪАМРĂК ШУХĂШСЕМ

Ҫамрăк шухăшсем вăйлă —
Ҫирĕп тимĕр хурҫăран.
Ҫитмелле кунсем ваҫҫи
Вăй параŭ вăл хастаррăн:

Тасҫа та ҫитсе кураŭ,
Пĕлĕт ҫине те улăхаŭ!
Ҫутă, ҫĕнĕ тĕнҫене
Вĕренмешкĕн тытăнаŭ

---

## ВĔРЕНӲРЕ

*„От битвы задрожит земля.*
*Она потонет в гуле, в звоне...“*

*А. Безыменский.*

Еп ерех ĕҫмен макăрса ларма,
Ӳтĕме сăрăхтарман ҫĕлĕмпе,
Вăрăра тытăнман пуҫа ҫикме,
Йатлаҫса килмен тăвансемпе...

...Рапфака килиђђен, епӗ çын пулнӑ:
Тӗттӗм, ухмах, йалти йӑваш ађа.
Йӑвӑр ӗçӗн шӑрӑх йара кунӗ
Ыталаса та ђуп тунӑ мана...

. . . . . . . . . . . . . . .

Йӑвӑр ӗç хушрӗ — мана вӗренме,
Хӑйӗн йӗркине малашне пӗлме,
Ӑслӑлӑх шухӑшне вырӑна кӯртме,
Çитменлӗхсене пӗтерсе пыма...

...Рапфакра, унта епӗ пӗђђен мар:
Йалтан килнӗ ђӑваш ађисемпе.
Пӗр-пӗрне епир нихӑш те йут мар.
Килӗшетпӗр тӗпрен шухӑшсемпе...

Партти пире çирӗп çул кӑтартаť.
Вӑл çулӑн ниçта та пӗр кукӑр çук...
Пирӗн çулӑмӑр çак ӗнтӗ пулаť, —
Урӑх çул çинђен шухӑшӑмӑр çук...

---

## ИӐТӐНАŤ ТИКТАТТУРӐ МЛАТУКӖ

Анклин халӗ ђикен,
Вӑйлӑ ђикен.
Йӗпсем тӑрнаççӗ куçран та пуçран.

Вӑйлӑ,
Ӗçре пиçнӗ ӗçлекен.
Куллен
Тапаť те çапаť айакран.

Пӯрт пек пысӑк шампа
Мӑн хырӑм
Кӑшт анђах вӑл шӑнӑçаť кӗпине.

Йӯçӗрен те йӯçе хура сӗрӗм
Кӗрет хӑйӗннех çӗрнӗ сӑмсине.

Мӑн хырӑм урлӑ çыхнӑ пӑйавӗ
Çӗрет хуллен
Çӗрет,
Татлаť кунран кун.

Пĕтет, пĕтет кунĕ.
Путаť мулĕ —
Ак пĕтмелли кун
Халĕ çитрĕ ун.

Ĕçлекен!
Йăт млатук,
Йăвăр млатук,
Çап капитала ђĕре тĕлĕнђен.

Тыт!
Каллех çап!
Хур çурăмран, хур ђак!
Вăл пĕттĕр!
Вăл вилтĕр!
Кайтăр кунтан!...
Акă,
Хаљ кисренет пĕтĕм тĕнђе.
Ишлет те
Пĕтет вăл капитал.
Тĕнђипе пролеттари умĕнђе
Хĕрелет те
Вут сирпĕтет сунтал.

Йăтăнаť тиктаттурă млатукĕ.
Илтĕр! Илтĕр!
Çапаť, ĕçлекен шаккаť...

Ав вĕçет,
Ав вĕçет ĕç йалавĕ,
Витет ĕçе,
Витет çĕре — хуплаť!..

---

## ТĂВАН ÇĔР-ШЫВ

*„Наша родина — весь мир"*

Шурă тинĕсĕн шăннă хĕрринђен
Тăван çĕр-шывăм манăн пуçланаť.
Ирĕк Крыма, Капкаса çитиђђен,
Уççăнах сывласа вăлă выртаť.

Аслă вăлă, вăйлă, Аслă СОЙУС!..
Темиçе пин таран çынни пурăнаť,
Вĕсем пулнă халĕ пурте пĕр тус...
Çитĕнет вăй, çĕнĕ пурнăç пулаť...

Ман тăван çĕр-шывăм, вăлă паллă:
Вутне, хĕнне, — темне те темне темне те —
Тахçанах çав вăлă курнă — пиçнĕ,
Хĕрелнĕ вĕсемпе çак пĕлĕт те...

Килҕĕ Окťапĕр, хĕрелҕĕ тĕнҕе,
Тухрĕ хĕм, йăванҕĕ хĕп-хĕрлĕ вут,
Çулăм пулҕĕ йалав — хĕрлĕ тĕнҕе,
Ыталарĕ çĕре, ҕуптурĕ пин хут...

Çавах уçрĕ СОТСИАЛИСĂМ алăкне,
Шаккарĕ çĕре тăвата йенҕен.
Вара вăл хуҕĕ тимĕртен çулне
Сарă вут хĕвел патне çитиҕҕен...

...Çитетпĕр, çитетпĕр хĕвел патне;
Калатпăр епир пурте пĕр харăс:
— „Тăван çĕр-шывăмăр — пĕтĕм тĕнҕе!
Пире çăлатĕ паллă, ҕаплă ĕç!“

## ÇĔНĔ ЙАЛ

Савнă уйăм,
Савнă уйăм
Йăвантарах ес хумна:
Тăван йалăм,
Çĕнĕ йалăм
Савăнатĕ санпала.

Савăнмасăр,
Савăнмасăр!... —
Çĕнĕ пурнăç халĕ ун;
Ывăнмасăр,
Такăнмасăр
Ўсетĕ вăл кунран кун.

Кунĕ çутă,
Хырăм тутă, —
Ђăваш йурлаť çĕнĕ йурра;
Ыраш пулнă,
Шăркаланнă, —
Савăнтараť вăхăтра.

Епир тухнă,
Ака тунă
Ĕçрен пĕртте хăраман;
Ĕçĕн йатне,
Ун хăватне
Ђапсăр тесе шутламан.

Халĕ ирĕк
Кунта ирĕк...
Вăл вĕт ђаплă вут пекех...
Вутран тухаť,
Ав сирпĕнет
Çĕнĕ хĕлхем йалкăшсах...

Хĕлхем çураť,
Акă çапаť
Ĕмĕр пулнă тĕттĕмне;
Путлантараť,
Пуç устараť
Тĕн сĕрĕмĕн тĕтрине.

Ак ђиркӳ те,
Халĕ лараç карăнса.
Картийĕсем,
Алăкĕсем
Выртаç çĕртре йăванса;

Çурăк ђанĕн,
Пуп сассийĕн
Урăх пулмĕ уласси;
Çын вилсен те,
Çуралсан та
„Шыçăнаймĕ пуп шыççи...“

* *
*

Копператси —
Пурнăç çыххи
Пирĕн йастах халĕ пур;
Тавар килет,
Хресҫен илет, —
Савăнăça тўрех кур...

Ак савăнăç!..
Тата пурнăç!..
„Всем на радость!!. ку мĕн-ха?
Кинокарттик!
Тĕлĕнтертĕн
Йалти пĕтĕм халăха.

Ватти кулҫе,
Алне çапрĕ
Çак вăхăта çитнĕрен;
Кинора та,
Ҫăн-ҫăнах та
Пурнăç шăваť ирĕкрен...

Кулак тусĕ —
Хуликанĕ
Намăс курҫĕ ухмахран,
Пантитланма,
Çын вĕлерме,
Пăрахаť вăл пайанран...

* *
*

Аҫи-пăҫи —
Ĕç тăпаҫи
Тытаť çирĕп аллине;
Ыран ирех
Пурĕ пĕрех
Йусамалла кĕперне...

Комсомолăн
Вăй хăваҫĕн
Шăранмалла çак ĕçре...

Акă вăлă,
Ĕç йалавĕ,
Вĕçет хĕрлĕн пĕлĕтре.

Пĕлĕт кăвак...
Пăх халĕ ак,
Вĕçсе кайаť йероплан!..
Тĕр тĕрлесе,
Шăкăртатса
Ак шыв йухаť валакран...

Ахăлтатса,
Йур йурласа
Çамрăк кайаť хаљ ĕçрен;
Вара каçпа
Хут купăспа
Савăнаççĕ тĕрлĕрен...

Акă пурнăç!..
Ак савăнăç!..
Халĕ епир ирĕкре...
Еппин ĕçлер! —
Ирĕк пыраť ĕмĕре...

---

## УЙРИ ШУХĂШСЕМ

1. Хресђен йалта
Халĕ шутра:
Суха çине
Ак тухмалла.

2. Суха пуçин
Турти çĕрнĕ;
Тимри таçта
Тухса ўкнĕ.

3. Халĕ унпа
Мĕн тумалла?
Мĕнле уйра
Ĕçлемелле?

4. Йе Лашана
Амантмалла?
Йе шăм-шакка
Çĕмĕрмелле?..

5. Пулнă кунсем,
Суха пуç те
Такамшăн та
Тăнă малта.

6. Çĕр-аннене
Вăлах майпе
Урлă-пирлĕ
Ђĕрсе пынă.

7. Лаша хыççăн
Çынни утнă;
Вĕçнĕ тусан,
Вĕçнĕ хытă...

8. Уйри тырсен
Пуђаххисем
Ларнă йалан
Тек тĕлĕнсе.

9. Хăрăк çилĕ
Çантах тата
Хыткан тырра
Тăнă тăкса...

10. Тырри хуллен
Ир те, каç та
Ларнă йĕрсе
Ывăниђђен...

11. ... Мĕншĕн вăлă,
Çакă тырă,
Пирĕн уйра
Çапла йĕнĕ?..

12. Мĕншĕн пуçне
Силле-силле
Вăл куљљаннă
Ăшă кунра?..

13. Мĕншĕн ђăваш
Куллен хĕлле
Хăй пӳртĕнђе
Выçă ларнă?..

14. Мĕншĕн, мĕншĕн
Ку капла-ха?..
Илтен, тусăм,
Ав тыр калаť:

15. — „Пăхăр мана,
Епĕ хыткан:
Ырă пурнăç
Пĕр курман...

16. Апат-çимĕç
Çук айалта;
Çĕр кăккăри
Памасť ним те...

17. Тымар манăн
Типсе кайнă
Вилес патнех
Вăлă çитнĕ...

18. Илĕр çĕре,
Унăн питне, —
Унта мĕн пур? —
Валăр мана!..

19. Тахçанах вăл
Типсе кайнă:
Çăвĕ йăлтах
Йухса пĕтнĕ...

20. Унăн çинђе
Пурăнмалли
Халĕ çук-çке —
Мĕн тумалла?

21. ...Хăрăк çилĕ
Пĕрмай кашлаť;
Çĕрти тусан
Таçтах вĕçет...

22. Уйра тырă
Ырă пулсан,
Унăн пулĕ
Хăйĕн илем.

23. Çӳлте тăри
Йурлĕ пĕрмай;
Ылттăн сасси
Кайĕ йан-йан...

24. Тӳрĕ çулпа,
Çамрăк çулпа
Утĕ хресђен
Уйа пăхса.

25. Унăн аҫи —
Комсомолĕс
Хĕрсе ĕçлĕ,
Ĕçлĕ тĕрĕс...

26. Çĕнĕ шухăш
Тупĕ вăйне;
Ырă тупăш
Пулĕ алра...

27. Ана çинҫе
Трактăр пулĕ:
Ҫупĕ, ҫупĕ
Пĕтĕм вăйпа...

28. Çĕр çемçелĕ,
Мăнтăрланĕ;
Имçам пулĕ -
Уй апаҫĕ...

29. Унтан уйпе
Тинĕс çи пек
Кашла-кашла
Тыр хумханĕ.

30. Вăйлă хумĕ
Куçа çийĕ;
Пĕтĕм ҫуна
Савăнтарĕ...

31. Вырас вăхăт
Çитсе пырĕ
Каллех машшин
Уйа тухĕ.

32. Паттăр хресҫен
Ĕçлĕ, ĕçлĕ...
Хăйĕн ĕçне
Савса йурлĕ...

33. Сасси кайĕ
Пĕтĕм уйа;
Йанрĕ, йанрĕ
Хум çийĕнҫе...

34. „Ак савăнăç!
Ак савăнăç!"
Тейĕç пурте,
Йурлĕç хĕрсе...

35. Хресҫен йалта
Халĕ шутра:
Çĕнĕ пурнăç
Ак тумалла...

* * *

*Сементейа.*

Акă уй... Ыраш ҫӳхенет, кулаŤ умра.
Кунта илем... (кирлĕ çав вăл та вăхăтра).
Ак хĕвел çӳлтен сапаŤ ылттăн çуттине,
СапаŤ те йурлаŤ ирĕк уйăн йурине...
Те вăл та комсомолĕс, те — йаш çын анҫах?..
Илтĕр! Çын пек йурлаŤ пирĕн савнă йуррах...
— „Парăр мана купăс, еп те тăсса калам ăна...
Çапса салатам хуйхă пуснă кивĕ куна...
Шăхăр ес те çил, шăхăр тустарса уйа!..
Еп те парăп кăларса хамăн ҫĕрĕ вăйа...
Унтан иккĕн пĕрлешсе сар ыраша мухтар,
Пиçен-кикен таврашне кăкла-кăкла утар!!!

* * *

Шухăшласассăн, кам аса илмĕ
Ĕлĕкхи пурнăçăн кунĕсене;
Мĕнле çын халĕ ĕнтĕ пĕлеймĕ
Унне йăвăр, хăрушă пусмăрне...

Ђăваш хресђенĕ, унăн ађийĕ
Тухма пĕлмен тĕттĕм йалĕнђен.
Хăватлă, хĕрнĕ ĕçĕн йурриĕ
Йанрайман вăл вут тухиђђен...

. . . . . . . . . . . . . . .

Халĕ апла мар, йађĕ ун çук мар:
Ĕçлĕ халăх хушшинђе ђăваш пур...
Вăл та утаť, утăмĕ хастар, —
Ђĕрĕ вăйĕ те аллинђе ун пур...

. . . . . . . . . . . . . . .

Тăхта-ха, тăхта пăртак, пĕр кана,
Шупашкарта пулĕ ђаплă хула.
Хуллен-хуллен айакри çырмана
Ывăнса йулĕ кивĕ йăла...

Тутар, ирçе нимĕç, киркис, йаппун —
Пурте пулайĕç хăнара кунта...
Ђăваш çыннийĕн çакă ырă кун
Уринђе пулĕ çĕнĕ, çĕн çăпата.

---

## ИРХИНЕ

*О. Крикорйĕва.*

Хĕвел пайан
Савса тухрĕ,
Йалсем çине
Ăшшăн пăхрĕ.

Сарă пиђĕ
Темĕскертен
(Пĕлмерĕм те)
Кулса йађĕ..

Тĕттĕм пўрте
Çутти кĕђĕ,
Хресђен ђунне
Савса йађĕ...

Çтена çинђе
Сехет çапрĕ,
Ĕçлемешкĕн
Вăхăт çитрĕ...

## РАПФАК САЛАМĔ

*(Ђăваш атъинтђен)*

Салам сана, ђăваш хресђенĕ, салам.
Пĕтĕм вăйпах епĕ ăна калам...

Епĕ — сан ывăлу! Ĕç ађине
Ес пăхнă, ђăваш йалĕ — анне.

Сан ват йăмрусем мана ўстернĕ,
Ађашласа пуçран лăпканă.

Ĕçсем хыççăн сулхăнунта епĕ
Йурласа ларнă хаклă йурă.

Вăл ĕç мухтавĕн, ĕçĕн йурри,
Хаљ те йанрать унăн кĕвви.

Епĕ ăна манман, манмастăп-ха.
Вăйпах йурлатăп çак рапфакра.

Рапфак вăл — пирĕн савнă лаççăм,
Унта манăн та уçăлђĕ куçăм.

Епĕ килтĕм унта кутамкка çакса,
Вĕренме тесе вăйпа хавланса.

Халĕ вĕренетĕп, вĕренеп хуллен,
Кранит кĕтесне кышлатăп куллен.

Йăвăр ĕç маншăн хăрушă та мар,
Еп ĕçре пиçнĕ, ĕçре пулнă ар.

Ир ирех утатăп ĕçсем патне,
Пĕрмай пулăшатăп ђăвашăн йалне...

...Салам сана, ђăваш хресђенĕ, салам,
Вăл манăн ĕçре пиçнĕ салам.

---

## ÇУЛЛАХИ ИР

Çутă шурăмпуçĕ
Кулса хăпарать,
Тĕнђен çут илемĕ
Хулленех килет.

Харăсах йусанђĕç
Хĕрлĕ ђеђексем,
Тўрех çав сирĕлђĕç
Кăвак тĕттĕмсем.

Тĕлĕнмелле вăрман
Уççăнах сывлаť,
Ирĕкри çулçисен
Выђасах килет.

Кайăксем ывăнмасăр
Хорпа йурлаççĕ;
Кĕвĕсем ђарăнмасăр
Хăлхара йанраççĕ.

Ăшă, тутлă ăйхăран
Çынсем вăранђĕç;
Лайăхах каннăран
Ĕçе ђас тытăнђĕç.

Ађи-пăђи — паттăрсем
Выђаççĕ урамра,
Тăна кĕрсе çитнисем
Хир варринђе — ĕçре.

---

ПАТРАК

*(Ĕлĕкхи йурă)*

Вăрăм вырăс ут çулаť,
Çави çине уртăнаť.
Ман мĕн çине уртăнас? —
Ни çурлам çук, çавам çук...

Кĕр-кĕр! туса çил вĕрет,
Йăвăç-курăк хумханаť;
Хуçа хĕрсе йатлаçаť —
Манăн ђуна хăратаť...

Хура пĕлĕт пĕрмайах
Шăваť йалсем çийĕнђе!
Манăн ĕмĕр хулленех
Иртет кĕтў патĕнђе...

Хура пĕлĕт шунă ђух
Мĕн каласа йурлам-ши?
Патрак ĕмĕр иртиђђен
Мĕнле тўссе пурнам-ши?

## ИУРĂ

Уйра тăри йурласан
Килет уйăн илемĕ;
Епир ĕçе тытăнсан
Килет ĕçĕн хăваҕĕ.
Тырă пиçсе çитнĕ ҕух
Килес килмест ман уйран;
Ĕçсем лайăх пулнă ҕух
Кайас килмест ĕç кунҕен.
Улăх ути ука пек
Ирхи сывлăм шывĕпе:
Пирĕн ĕçсем ылттăн пек
Хамăр тытса тунипе.
Епир ĕçе тухнине
Пурте халĕ ырлаççĕ;
Кайран вара уссине
Йалĕпелех кураççĕ.

---

## КАРТ ВĂЙЙИ

*„Мăн-Шетмĕре комсомолĕссем картла выљама вĕренсе кайрĕç. Кашни каçах 10-15 çын таран пухăнса „первый руки— пуд муки“, тесе тул çутăлитъҕен выљаççĕ.“*

*Уиккм.*

Каç... Сивĕ... Сивĕ!...
Кантăксем шăннă...
Уйăх çуттийĕ
Йал çине ўкнĕ...
Урамра шăпах...
Пĕр сас-ҕĕв те çук...
Йытă тахçанах
Кĕрсе выртнă — çук!..

. . . . . . . . . . .

Акă пĕр пўртре
Пурха такамсем;
Лутра сĕтелре
Выртаççĕ картсем...
Вунпилĕк аҕа —
Пурте йалтисем...
Пăх халĕ, пăх-ха!
Мĕн тăвач мурсем...
Сурăмсем тăрăх
Тара йухтарса
Лараççĕ, ай-уй!
Картла выҕаса...

* * *

Аҫасем, туссем,
Ҫак путсӗр ӗҫсем
Ан пулҫҫӑр пирӗн
Хушӑра вӗсем!...

Вуламалли ҫурт
Кӗтет вулама:
Унта усал карт
Ҫук-ха аташма...

---

## Е Х - М А!...

*(„Патратски“ сӑвӑпа йурламалла).*

Шупашкартан еп куллен
Кӗтеп „Капкӑн“ ҫӗререн.
Ех-ма!

„Капкӑн“ хуҫи ухмах мар
„Капкӑнӗ“ те пысӑк мар.
Ех-ма!

„Капкӑн“ ҫине пӗр кунта
„Шӑлса“ хунӑ пӗр пупа.
Ех-ма!

Мӑнӑ пупӑн мӑн майри
Тем пек вӑрҫнӑ ун пирки.
Ех-ма!

Комсомолӗс Ивана —
Хӗнемерӗ ҫут кӑна.
Ех-ма!

Аван, вӑлӑ капкӑнкор,
Ҫырса йарат пӑх та кур.
Ех-ма!

Йал кулакӗ Митрахван
Виҫҫӗ лекрӗ пӗр трукран.
Ех-ма!

Ҫавӑнпа та, ҫухӑнсем
Унтан кулаҫ шӑл ҫыртса.
Ех-ма!

Пухусенђе, ĕç панђе
Сăмах памаç калаçма...
Ех-ма!

Йалти паллă хуликан
Тытăнђĕ хаљ вăрăран.
Ех-ма!

Малтан лекрĕ „Капкăна“,
Унтан — вара тĕрмене.
Ех-ма!

---

## САККОПА ВАЂЕТТИ

*Саккопа Ванђетишĕн рапоњњисем пысăк темонстратсисем туса ирттереççĕ. Сакко ĕнтĕ нумай кун апат çимен, сывлăхĕ наљарланса çитнĕ. Ванђетти 17 кун хушшинђе икĕ хут анђах апат çинĕ.* (Хаçатсенђен).

1

Саккопа Ванђетти — вĕсем пирĕн ђĕре.
Ах, мĕн ĕç пулмасť-ши пайан тĕнђере?!.
Çĕрĕн пиђĕ пиçнĕ вĕри йунпала,
Хăшсем мухтанаççĕ çантах мулпала,
Мул çине тийеççĕ мул, çапаççĕ йун,—
Йун йухаť шалкаса — вĕсемшĕн мăнкун.

2

Саккопа Ванђетти —вĕсем пирĕн ђĕре.
Ах, мĕн ĕç пулмасť-ши пайан тĕнђере?!..
Йе капитал тарăн çырана,
Йе касса утасшăн çĕрĕн кĕтесне?..
Анђах кĕтесре кăвар, çулăм унта;
Çулăм çинђе Октăпĕр — ђукун йупа.

3

Саккопа Ванҫетти — вёсем пирён ҫёре.
Ах, мён ёç пулмасť-ши пайан тёнҫере?!..
Пётём пролеттариат паллă ёçре —
Кёпер хываççё, тимёрлеççё çёре,
Йурлаççё пиншерён харăс шаккаса, —
Тупă пулаť! Ак хёç кайё йанраса.

---

## КИТТАЙ

Америк,
    Йаппони,
Анкли — йытисем...
Урнă тахçанах,
    урнă вёсем:
Кăкăрёсем йунлă,
    йун ёçнё мурсем...
...Тулман-шим вёсенён
    шалҫа хырăмёсем?...
...Е, Анкли!
    Анкли!
        Шуйттан çăпати,
Куçна тăрăнатё
    киттайёс сенки;
Пуçна лекетё
    ҫукмар,
        атă кёли...
Халă йăтăнаť
    ёçлекенён алли, —
Çапаť те
    сирпётет
        мулăн тымарне,
Тимёртен хураť
    тёнҫен никёсне...
...Авă, Шанхай,
    унта вут,
        хёлхем, хёлхем...

Урамра халăх —
        киттайĕс, киттайĕс...
Вĕсем —
        Киттайăн тивĕçлĕ хуçисем,
Шаккаççĕ,
        ватаççĕ мула вĕсем.

---

## САМАНА

Ирĕк Сойуса капитал пĕтересшĕн,
Пĕтересшĕн ĕçлекенпе хресҗене;
Кунталла алне тăсса йарасшăн,
Хурасшăн ăна Сойус çине...
Приттани җупатĕ пĕтĕм çĕр тавра...
Акă Киттай, Киттай пусмăрта!
Револҗутсиллĕ Восток, Восток тыткăнра:
Ирĕк çук, пусмăр, вилĕм унта.
Капитал ăна пĕрре те пăхмастĕ:
Вăл ĕçет йуна, çийет сынна...
Капитал, вăл йытă пекех җупатĕ:
Хуплаť куна, хуплаť вутта...

. . . . . . . . . . . . . . . . .

Пăх, Приттани, пăх тĕнҗе çине куçпа;
Унта савăтсем, йалсем, хуласем
Пиçĕхнĕ пĕтĕмпех ĕçĕн тарĕпе —
Унтах шавлаççĕ, йăслаççĕ çынсем:
— Приттани, куран пире, ĕçĕн çарне;
Илтетĕн, илтен шакканине;
Куран, шăлатпăр епирех урамсене,
Шăлатпăр, вĕçтеретпĕр тусан...
Приттани, аллăна есĕ йатсассăн,
Ĕçлекен çине йарсассăн,
Епир пăрахатпăр, пуртта, пăҗка та;
Вара çĕклетпĕр хамăр җышка...
Унтан курăн епир ерттелленнине,
Илтĕн, епир: „Вут!.. Вут!..“ тенине...
Вутран пулĕ ĕç, пулĕ револҗутси!..
Пулĕ самана, çĕнĕ самана!!!

## ХРЕСЂЕН ИУРРИ

*И. Васçилийĕв хр-не*

Халĕ акă мĕнле майсем:
Турра манђĕç çамрăккисем...

Епĕ хам та турăшсене
Кайса ывтап шуйттансене.

— „Турă çук!..“ теç... ай-уй! тĕнђе...
Ђăнах çук вăл пĕлĕт çинђе...

Çурта илмес, укçа йамас...
Хура намăс никçан курмас...

Халĕ çамрăк кулаť пупран,
Кĕç-вĕç тараť пупĕ унтан...

Кунран-кунах ђирĕк çĕрет.
Тĕн ĕмĕрĕ тинех пĕтет.

Иурăсем те халĕ урăх:
Тĕкеç вĕсем пулман туррах...

Пулман турă халђ пулас çук,
Пĕлĕт çинђе савăнас çук...

Ак кинемей сăра тăваť
Иккунсенђен хăйă ђĕрет...

Турă пулсан, вăл курмаллах...
Çиленнипе вăл тытмаллах...

Анђах çук та мĕн тăвас-ха?
Çавăнпа та сăхсăхмас та...

Сăхсăхмашкăн еп ухмах мар,
Ухмах пулма епĕ пуп мар.

## КОМУНӐ...

Ех, йурлатпӑр хӗвелӗн йуррине!..
Куллен хуратпӑр тӗнђен никӗсне...
Çутӑ кун пирӗн ӗçӗмӗр ђаплӑ...
Сотсиалисӑм — пирӗн комунӑ...
Авӑ комунӑ, авӑ комунӑ!...
Тӑватпӑр, тӑватпӑр! — Ех, комунӑ!..
Комунӑ, комунӑ — ђаплӑ ӗмӗр,
Сана ырлатпӑр, йурлатпӑр епир!..

---

## ЛЕНИН

*„Ленин — знамя будущего. Под этим знаменем угнетенное человечество победит мир гнета и нищеты“.* (Из воззван. МКРКП(б)

1

Ленин вӑл — Партти!
Партти вӑл — Ленин!
Çакна татах каласшӑн
Епир харӑс пайан,
Ленин ӗçне тӑвасшӑн, —
Ку паттӑрлӑх йалан!...

2

Ленин вӑл — партти!
Партти вӑл — Ленин!
Ленин вилмен, çук вилмен!
Вӑл пур!.. Партти — ак вӑл!..
Партти çирӗп тимӗртен, —
Çулӗ ун — вут, тӑвӑл!..

3

Ленин вӑл — Партти!
Партти вӑл — Ленин!
Кӗрешӳ — тӑвӑл — тӑвӑл, —
Ку пулаť пирӗн çул!..
Ленин, ес пур, ес — тӑвӑл!..
Тӑвӑл — ђи ђаплӑ çул!..

---

## ЛЕНИН КАЛАНИ

Сана епир,
Ĕçсыннисем,
Ђаплă ĕçшĕн
Тав тăватпăр.

Есĕ пире
Çул кăтартрăн,
Çутă вăйне
Тупса пытăн.

— „Ĕçхалăхшĕн
Тĕттĕм пĕттĕр,
Мул тĕп пултăр!!.
Терĕн есĕ.

Сан сăмахна
Тăнларăмăр:
Тĕттĕмне те
Аркатрăмăр.

Тĕттĕмне те
Пĕтеретпĕр.
Çуттине те
Хаљ куратпăр.

Сана, Ленин,
Ĕмĕр мухтар,
Ес хушнине
Веçех тăвар...

---

## ЛЕНИН ĂÇТА?

Ленин ăçта?... Ăçта-ши Ленин?...
Кала мана партти, кала!
Тен есех Ленин, аслă Ленин?...
Пар мана ђасрах сăмахна!...

Пĕр çын çеç вилнĕ, пĕр çын çеç çук...
Пайан ÿкнĕ Ленинăн пилет...
Хурланнă ав çурлапа млатук...
Хура йалав ађа пек йĕрет...

Ăçта партти, унта пур Ленин!..
Ленин ђĕри — вутлă хунар.
Ун çутти — ленинисăм — Ленин, —
Ленин вĕт пулнă комунар!..

Çÿлерех çĕклĕр сут хунара!..
Ленинисăм çеç пирĕн çул,
Вăл ĕнтĕ хаклă пăшал алра...
Еппин Ленин вилмен, вăл пур!..

# ПОЕТСЕМ ПАТНЕ

Ан вăрçăр манпа, ан вăрçăр, — ыйтатăп!..
Сăвăсем ман naђар, хамах еп калап...

Сире кирлĕ мĕн „лирикккă“, хĕрне ђеђек;
Сире кирлĕ ерех, сăра йенђек...

Пĕрре тунмасп, урăх лиры ман...
Ĕçре вăл çуралнă, ђеђекшĕн пулман...

Еп хатĕр ђеђексене таптама,
Хатĕр вĕсенђен таçталлах тарма...

Ђеђекре мар поеçи, поеçи ĕçре;
Ĕç пултăр анне, тин выртĕ ђĕре...

Кирлĕ мар мана ылттăн мерђен те...
Кирлĕ мар çĕрĕк лиры вилсен те...

Парăр ĕç! Парăр хурçăпа тимĕр!..
Çакна вĕт ыйтаť çирĕммĕш ĕмĕр..

ТУПМАЛЛИ.


| | Стр. |
|---|---|
| Тăвăл | 3 |
| Питте аван-çке | 4 |
| Вăхăт | — |
| Çамрăк тусăма | 5 |
| Пирĕн ир | 6 |
| Апла пулсан | — |
| Йурă | 7 |
| Ĕç ађи | — |
| Çамрăклăх | 8 |
| Çамрăк шухăшсем | — |
| Вĕренӳре | — |
| Йатăнаť тиктаттурă млатукĕ | 9 |
| Тăван çĕр-шыв | 10 |
| Çĕнĕ йал | 11 |
| Копператси | 13 |
| Уйри шухăшсем | 14 |
| Акă уй... | 16 |
| Шухăшласассăн... | 17 |
| Ирхине | — |
| Рапфак саламĕ | 18 |
| Çуллахи ир | — |
| Патрак | 19 |
| Йурă | 20 |
| Карт ваййи | — |
| Ађасем, туссем | 21 |
| Ех-ма! | — |
| Саккопа Ванђетти | 22 |
| Киттай | 23 |
| Самана | 24 |
| Хресђен йурри | 25 |
| Комунă | 26 |
| Ленин | — |
| Ленин калани | 27 |
| Ленин ăçта? | — |
| Поетсем патне | 28 |

# СССР-ти ХАЛĂХСЕН ТĔП ИСТАТТĔЛСТВИ

**Илемлĕ литтературă:**

| | | |
|---|---|---|
| Тĕне хирĕç пйессăсем. 80 стр. | Хакĕ | 50 пус. |
| **Хусанкай.** Хури. Çирĕм ултă. 32 стр. . . . . . . . . | „ | 15 „ |
| **Данилов.** Калавсем. 88 стр. . | „ | 30 „ |
| **Шупуççынни.** Йеркĕн. 176 стр. | 1 т. | 25 „ |
| **К. Иванов.** Нарспи. 136 стр. . | „ | 50 „ |
| **Исаев.** Çĕнелнĕ йăх. 104 стр. | „ | 45 „ |
| **Викторов.** Çырмара. 84 стр. . | „ | 40 „ |
| „ Йалти кĕвĕсем. 40 стр. | „ | 30 „ |
| Йунлă самана. 72 стр. . . . | „ | 35 „ |
| **Данилов.** Тайкара. 22 стр. . . | „ | 12 „ |
| **Талвир.** Хĕллехи сивĕре. 39 стр. | „ | 25 „ |
| **Краснов.** Шуррисемпе çапăçни. 112 стр. . . . . . . . | „ | 45 „ |
| **Орьев.** Комсомолĕссем. 64 стр. | „ | 35 „ |
| **Полянская.** Ђасси. 24 стр. . . | „ | 12 „ |
| **Неверов.** Пĕђĕк ађасем ваљљи çырнă калавсем. 30 стр. | „ | 40 „ |

| | |
|---|---|
| **Перовская.** Мишкă. 25 стр. | . Хакĕ 25 пус. |
| **Олейников.** „Влаç пирĕн алăра“ 44 стр. . . . . . . . . | „ 20 „ |
| **Касаткин.** Çунат Петĕр. 24 стр. | „ 12 „ |
| **Владимирский.** Савăт аҫи Микул 26 стр. . . . . . . . . | „ 15 „ |
| **Бианки.** Кайăк çурҫĕсем 22 стр. | „ 15 „ |
| Вĕçен кайăксем. 10 стр. . . . | „ 25 „ |
| **Золотов.** Çамрăк паттăрсем 36 стр. . . . . . . . . | „ 35 „ |
| **Викторов и Семенов.** Ҫăвашăн илемлĕ литтературĕ. 151 стр. . . . . . . . . . | „ 90 „ |
| **Шаланкă.** Ирхи сывлăм. 40 стр. | „ 35 „ |
| **Курак.** Сăвăсем. 39 стр. . . . | „ 35 „ |

---

**КĔНЕКЕСЕНЕ ИЛМЕ УКÇА ÇАК АТРĔССЕМПЕ ЙАРĂР:**

1. Москва, Центр, Никольская, 10. Торготдел Центриздата.
2. Самара, Советская, 76. Средне-Волжское Отделение Центриздата.

Хакĕ 30 пус

Цена 30 коп.

х.

На чувашском языке

ХУДАР. Черный пот.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР.
Москва, центр, Никольская, 10.